27-мĕш çурă тухать. Хакĕ 20 пус.

1945
ЯНВАРЬ
16
ЫТЛАРИКУН
10(6761) №

ЧĂВАШ КОММУНИ

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТАШУПАШКАР ХУЛАСОВЕЧĔН ХАСАЧĔ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Украинăри 1-мĕш фронт сарĕсен командующине
Совет Союзĕн Маршалне **КОНЕВА**

Фронт штабĕн начальникне
Арми генералне **СОКОЛОВСКИЕ**

Украинăри 1-мĕш фронт сарĕсем, малалла хăвăрт наступлени туса пырса, паян, январĕн 15-мĕшĕнче, Польшăн администрацин[и] центрне — КЕЛЬЦЕ хулине, сулийĕрсен паха узелне [е] хуçалăх тĕлĕшĕнчи пысăк [тата] нимĕçсен обороний тĕреклетнĕ пункт[не] туртса илнĕ, çавăн пекех тата, тăшман[а] çапăçса, халăх пурăнакан ытти 400 пункта ытла йышăннă.

КЕЛЬЦЕ хулине туртса илессишĕн çапăçнă чухне çаксем чапа тухнă: ГОРДОВ генерал-полковникăн, ПУХОВ генерал-полковникăн, ЛЮБАРСКИЙ генерал-лейтенантăн, МАЛАНДИН генерал-лейтенантăн, ГЛУХОВ генерал-лейтенантăн, ПУЗИКОВ генерал-майорăн, КОЛОБОВ генерал-майорăн, КРАСНОВ генерал-майорăн, ВОЛКОВИЧ полковникăн, МЛАДЕНЦЕВ генерал-майорăн, ЧЕРВОНИЙ генерал-майорăн, ПАНКРАТОВ генерал-майорăн çарĕсем; артиллери генерал-лейтенанчĕн СЕМЕНОВАН, артиллери генерал-майорĕн ДЗЕВУЛЬСКИЙĔН, артиллери генерал-лейтенанчĕн КУБЕЕВАН, артиллери генерал-майорĕн ХУСИДАН, КОРОЗИН подполковникăн артиллерисчĕсем; танковăй çарсен генерал-полковникĕн НОВИКОВАН, ЛЕЛЮШЕНКО генерал-майорĕн КОРОЛЕВАН, САДОВСКИЙ полковникăн, танковăй çарсен генерал-майорĕн УПМАНАН, танковăй çарсен генерал-майорĕн ФОМИНЫХАН, ПУШКАРЕВ полковникăн, ОРЛОВ полковникăн, ЧУПРОВ полковникăн танкисчĕсем; инженери çарĕсен генерал-лейтенанчĕн ГАЛИЦКИЙĔН, инженери çарĕсен генерал-майорĕн ГУСЕВАН, инженери çарĕсен генерал-майорĕн ВАРВАРКИНАН, КОРЯВКО полковникăн, ЗАЙЦЕВ полковникăн саперĕсем; сыхăну çарĕсен генерал-лейтенанчĕн БУЛЫЧЕВАН, сыхăну çарĕрен генерал-майорĕн АХРЕМЕНКАН, ОСТРЕНКО полковникăн снарядсчĕсем чапа тухнă.

Тунă çĕнтерĕве яланлăха палăртса хăварас тесе, КЕЛЬЦЕ хулине туртса илессишĕн çапăçнă чухне уйрăмах чапа тухнă соединенисемпе чăсене «КЕЛЕЦКИ» тесе ят пама тата орденсемпе наградăлама тăратăс.

Паян, январĕн 15-мĕшĕнче, 24 сехетре хăмăр Таван çĕршыв столици МУСКАВ, иккĕр çирĕм тăватă тупăпа çирĕм хут пĕр хăрăс персе, Украинăри 1-мĕш фронтăн пăтăр çарĕсене, КЕЛЬЦЕ хулине туртса илнĕскерсене, Таван çĕршыв ячĕпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан çарсене, КЕЛЬЦЕ хулине ирĕке кăларассишĕн çапăçнă çĕрте пулăшăкерсене, питĕ чаплă çапăçăшăн ТАВ ТАВАТАП.

Хăмăр Таван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн çапăçса вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене вилĕм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.

1945 çулхи январĕн 15-мĕшĕ.
№ 220.

Совет Информацин Бюровĕнчен

ЯНВАРĔН 13-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНАЙ СВОДКА

УКРАИНАРИ 1-мĕш фронт çарĕсем, январĕн 13-мĕшĕнче САНДОМИРТАН хĕвеланăçкерехри районран наступлени пуçласа ярса, авиацине çапăçма май паман пăхса çанталăка пăхмасăрах, тăшманăн вăйлă тĕреклетнĕ оборонине 40 километр сарлакăш фронтра татнă.

Тăшман оборонине татса кĕрес ĕçре лайăх организацинленĕ хăватлă артиллери наступленийĕ татăклă вырăн йышăннă.

Икĕ кун хушши наступлени туса пырса фронт çарĕсем 40 километр таран малалла кайнă, татса кĕнĕ вырăна 60 километр таран сарнă.

Малалла тапăнса пырса, пирĕн çарсем тăшман оборони вăйлă тĕреклетнĕ ШИДЛУВ, СТОПНИЦА, ХМЕЛЬНИК, БУСКО-ЗДРУЙ (БУСК), ВИСЬЛИЦА ятлă пунктсене штурмласа туртса илнĕ, çавăн пекех тата, тăшманпа çапăçса, халăх пурăнакан ытти 350 пункта ытла йышăннă, вăл шутра—ЧИЖУВ, ШЕЦНО, СКШЕЛЬЧИЦЕ, ЛУБАНЯ, СЛАДКУВ, МЛЫНЫ, ГАЛУВ, ПАСТУРКА, БОГУЦИЦЕ, ЗАГОСЦЬ, СКОТНИКИ, СТРОЖИСКА, БЖОСТКУВ ятлă пысăк ялсем.

БУДАПЕШТ хулинче пирĕн çарсем нимĕçсемпе венгерсен группировкине хупăрласа илнĕ унка хĕссе пырса, хĕвелтухăç енчи вокзала, хула сывăхне çӳрекен поездсен ЧЕМЕР станцине, хулăн газ заводне туртса илнĕ, пĕтĕмпе 200 квартал ытла йышăннă. Январĕн 13-мĕшĕнче БУДАПЕШТ хулинче пирĕн çарсем нимĕçсемпе венгерсен 2,500 салтахĕпе офицерне тытăнса илнĕ. Çакăн пек трофейсем тытса илнĕ: танксем—5, тупăсем—21, паровозсем—37, чугун çул вагонĕсем—2.160, цистернăсем—30.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведчиксем шыраса çӳренĕ тата чылай пунктсенче тĕллĕн-тĕллĕн çапăçнă.

Январĕн 12-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 36 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 8 самолетне персе ӳкернĕ.

ЯНВАРĔН 14-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНАЙ СВОДКА

Январĕн 14 мĕшĕнче пирĕн çарсем КЕЛЬЦЕ хулинчен кăнтăртарахра тата кăнтăр-хĕвеланăçкерехре, наступление вăйлатса пырса, çулийĕрсен паха узелĕ пулса тăракан ПИНЧУВ хулине туртса илнĕ, çавăн пекех тата, тăшманпа çапăçса, халăх пурăнакан ытти 200 пункта ытла йышăннă, вăл шутра—РАДОМИЦЕ, ЛИСУВ, КОРЫТНИЦА, БЖЕГИ, МЯСОВА, МОТКОВИЦЕ, ЯКУБУВ, МИРЖВИН, БРОЦЕРЫЖ, МИХОЛУВ, ГУРЫ, МЛОДЗУВЫ, КОЗУБУВ, ШИПОВ, ПЕЛЧИСКА, СОКОЛИКА, СТАРЫ КОРЧИН, НОВЫ КОРЧИН ятлă пысăк ялсем тата СОБКУВ, МЯСОВА чугун çул станцийĕсем. Çапла вара, пирĕн çарсем 60 километр сарлакăш фронтпа КИДА шывĕ урлă каçса кайнă, тăшманăн ку шыв çинче оборона тума паман, КЕЛЬЦЕ хулипе КРАКОВ хули хушшин ят чугун çула татнă.

ЧЕХОСЛОВАКИРЕ пирĕн çарсем, тăшман хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкса, ЛУЧЕНЕЦ хулипе чугун çул узелне тата ПЛЕШИВЕЦ хулинпе узловой чугун çул станцине туртса илнĕ, çавăн пекех тата, тăшманпа çапăçса, халăх пурăнакан ытти 40 пункта ытла йышăннă, вăл шутра—ГОРКА, ШАНКОВИЦЕ, ЛЕКЕШКА, ЗАЛУЖАНЫ, ВРЕЗОВО, УГОРКА, РОВНЯНЫ, КАЛИНЕВО, МЕЛЬШОВЕЦ, ЛУБОРЕЧ ялĕсем тата ГОРКА, СУШАНЫ, ЗЕЛЕНА чугун çул станцийĕсем.

БУДАПЕШТ хулинче пирĕн çарсем, нимĕçсемпе венгерсен группировкине хупăрласа илнĕ унка хĕссе пырса, хĕвелтухăç енчи вокзала, хула сывăхне çӳрекен поездсен ЧЕМЕР станцине, хулăн газ заводне туртса илнĕ, пĕтĕмпе 200 квартал ытла йышăннă. Январĕн 13-мĕшĕнче БУДАПЕШТ хулинче пирĕн çарсем нимĕçсемпе венгерсен 2,500 салтахĕпе офицерне тытăнса илнĕ. Çакăн пек трофейсем тытса илнĕ: танксем—5, тупăсем—21, паровозсем—37, чугун çул вагонĕсем—2.160, цистернăсем—30.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведчиксем шыраса çӳренĕ тата чылай пунктсенче тĕллĕн-тĕллĕн çапăçнă.

Январĕн 13-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 80 танкне çĕмĕрсе тăкнă.

ТАСС опровержений

Америкăри Ассошиэйтед пресс агентстви пĕлтерӳ сарать, çав пĕлтерӳ тĕрăх, Сталинăн, Рузвельтăн тата Черчиллĕн пулас конференцийĕнче де Голль генерала чĕнмен сĕнсе. Совет Союзĕ, Франци ыйтнипе, Пĕрлешӳ тĕлĕ Штатсемпе Англие ыйту панă пулать. Кунсăр пуçне, çав пĕлтерӳре калаçă тăрăх, нумаях та пулмасть де Голль Мускавра пулнă вăхăтра Сталин вилĕ çĕлă çĕршывăн руководителĕсен пулас конференцийĕнче де Голле кĕртмешкĕн ыйтма сăмах панă иккен, çакăншăн вара де Голль хĕвелтухăç Европăри территори ыйтăнăçсем тĕлĕнпе Совет Союзĕн шухăшне майлă пулмасăр килĕшмĕ иккен. Совет Союзĕ каре, хăй черечĕпе, Франци Рейн облаçне пама ыйтнине хута кĕме килĕшнĕ иккен.

Ассошиэйтед пресс агентствин çак пĕлтерĕвĕ пачах та тĕрĕс мар, тесе пĕлтерме TACC полномочи илнĕ.

КОРСУНЬРЕ ГИДРОЭЛЕКТРОСТАНЦИЕ ЕÇЕ ЯНА

Киев облаçĕнчен тухса тăнă чухне нимĕçсем Корсунь-Шевченковски гидроэлектростанцине сиплĕтсе янă. Вĕсем çичĕн çул станцине 5 районă электроэнерги пăрăса тăнă пулнă.

Станцие халĕ çĕнерен юсаççĕ. Станцин пĕремĕш черечĕ ĕçлеме пуçланă та ĕнтĕ. 400 пин пăлхăлă турбина ĕçлеме пуçланă. Пулăна электроэнерги пама тытăнăç.

(TACC).

Чăваш республики 25 çул тултарнине кĕтсе илме хатĕрленер

Археологи науки тĕпчесе пĕлнĕ тăрăх, чăвашсем Атăл таврашĕнче тăватă пин çул ĕлĕкрех пурăнма тытăннă. Этемлĕх историйĕн страницисенче чăваш халăхĕ çинчен вунулттăмеш ĕмĕртен пуçласа асăрçç.

Ыйăр та вăрăм çул утса тухнă пирĕн халăх, асаплĕ пулнă унăн кунçулĕ. Нумай ĕмĕрсем хушши вăл тĕрлĕ пусмăрçăсен мăшкăлне тӳснĕ. Ылттăн орда кĕтĕвĕсем таптанă чăваш çĕрне-шывне. Хусан ханĕсем тустарнă чăваш çыннин килне-çуртне, улпутсемпе капиталистсем ĕмĕн чăваш ĕç сыхнийĕн юнне. Тӳснĕ чăваш халăхĕ, анчах кĕрешнĕ. Çĕршер те пиншер çулсем, кĕрешӳсемпе тăвăлсем витĕр тухса, вырăс халăхĕ пулăшнипе илнĕ, пирĕн республика калама çук пысăк çитĕнӳсем турĕ. Тĕрлĕ тăшмансене, вăл шутрах буржуалла националистсене, хăйĕн çулĕ çинчен пĕр хĕрхенмесĕр сирсе пырса, чăваш халăхĕ хăйĕн аслă тăванĕ — вырăс халăхĕ хыçăн шанчăклăн малалла утрĕ, хăйĕн çĕршывне хăвăрт чечекленсе пыракан çĕршыв туса хучĕ. Пирĕн халĕ хамăран промышленность, механизацленĕ шултăра ялхуçалăхĕ, хамăран культурăпа искусство пур. Ĕлĕк «инородецком тĕнчекерсем, халĕ эпир халăх ятне илтме тивĕç пултăмăр. Ĕлĕк пуçа усса мĕскĕнĕт çӳренĕ чăваш çынни халĕ пĕрган правăллă халăхсен çемйинче хăйĕн ятне пĕр вăтанмасăр, чыслăн асăнать. Пирĕн халăх хăйĕн наци тивĕçлĕхне çӳлте тытса тăрать.

Иртнĕ çулсенчи хăйсен ĕçĕпе чăваш ĕçсынникем тивĕçлипех мухтанма пултараççĕ. Пирĕн республикă государство умĕнчи хăйĕн тивĕçне ялланах тӳрĕ кĕмăлпа пурнăçа кĕртсе пынă, халĕ те пурнăçласа пырать. Чăваш халăхĕн кăкрине совет правительствин чи пысăк наградăн — Ленин орденĕ илемлетсе тăрать. Çапăлла вара совет власĕ пире ирĕклĕн пурăнма май пачĕ çеç мар, вăл тата пирĕн ĕçе те пысăка хурса хавалать, хисеплет.

Акă мĕнпĕн ĕнтĕ чăваш çыннисем совет халăхĕн ирĕклĕхне, пирĕн правăллă пирĕн культурăпа искусствăна, пирĕн мĕнпур пуянлăха тата пире Совет власĕ панă автономие пĕтерсе тăкма хăнăхакан нимĕç вăрă-хурахĕсене хирĕç хăйсен пурнăçне шеллемесĕр çапăçаççĕ. Пирĕн хутĕлемелли пумай! Ана пире большевиксен партийĕ, совет власĕ панă. Ана эпир вырăс халăхĕ пулăшнипе илнĕ. Ана эпир пурнĕрех хутĕлесе хăваратпăр! Тăшмана татăклăнах тĕп тăвиччен, Берлин çине çĕнтерӳ ялавне сĕклесе лартиччен, эпир хамăр ялăра кĕрешӳ хĕпăшалне çирĕп тытса пырăпăр.

Республика ĕçсыннийĕсем тылра та хăйсен тивĕçне чыслăн пурнăçа кĕртсе пынăç. Вăрçă пынă çулсенче пирĕн халăх пур майсемпе те фронта пулăшма тăрăшрĕ. Предприятисемпе артельсем хăйсен программине тултарса пырассишĕн, колхозсемпе совхозсем çĕршывпа фронт валли тырпул ытлашах туса илессишĕн кĕрешрĕç. Паттăр Хĕрлĕ Çар валли çапăçу техники тума республикăри ĕçсыннисем миллионшар тенкĕ укçа пухса панăç. Йăлтах фронт валли, йăлтах Таван çĕршыва сыхласа хăварма!—çакăн пек кăмăл-туйăмпа пурăнчĕç, ĕлкĕреç, кĕрешрĕç республика ĕçсыннийĕсем Отечественнăй аслă вăрçă улăсенче.

Чăваш халăхне автономи параçи çинчен Сталин юлташ хатĕрленĕ декрета аслă Ленин алă пусса кăларнăранпа 25 çул тултарнине эпир кăçал нимĕç захватчикĕсене хирĕç, пыракан Отечественнăй вăрçă вĕçленсе килнĕ тапхăрта кĕтсе илетпер. Чăваш автономийĕ 25 çул тултарнă пирĕн халăх пурнăçĕнче калама çук пысăк событи пулса тăрать. Çав юбилей куне—чăваш ĕçсыннисен аслă праçник кунĕ, нумай-нумай çулсем асран каймăш кун пулăп одо. Çавăнпа та, паллах ĕнтĕ, вăл куна пирĕн лайăх хатĕрленнипе кĕтсе илмелле, татăх та пысăкрах çитĕнӳсемпе палла туса хăвармалла.

ВКП(б) Шупашкар хула комитечĕн XII-мĕш пленумĕ, нумаях та пулмасть пулса иртнĕскер, чăваш автономийĕ 25 çул тултарнă уйăх тĕлне республика столицине юсаса хатĕрлес ыйтăва пăхса тухса, питех те тĕрĕс турĕ, районсене лайăх пример пачĕ. Мĕншĕн тесен кашни район, кашни хула, кашни предприятипе учреждени тата колхоз халех хатĕрленме тытăнсан кăна эпир республикăн çак чаплă юбилейне тивĕçлипе кĕтсе илме пултарат[ăр].

Нимĕç фашисчĕсене хирĕç пыракан Отечественнăй вăрçă хăйĕн юлашки татăклă тапхăрне кĕчĕ. Анланмалла ĕнтĕ, çак тапхăрта пирĕн фронта пулăшас ĕçе нихăçан[и]нчен ытла вăйлатмалла. Çавăнпа та кашни предприятин хăйĕн программине ытлашшипех тата пысăк пахалăхпа тултарса пымалла. Республика юбилейĕ 1945 çулăн малтанхи çурçулĕ вĕçленсе пынă вăхăтра килет. Предприятисемпе артельсем, район тата пĕтĕм республика промышленноçĕ продукци туса кăлармалли çурçулти планă ытлашшипех тултарни, ĕç тухăçлăхне ӳстерни, продукцин пахалăхне лайăхлатни, чĕртэвара тата ытти материалсене перекегleни—Чăваш АССР 25 çул тултарнă юбилей тĕлне хатĕрленĕ пысăк парне пулеç. Çакна вара социализмлă ăмăртăва халех тата анлăн сарса пыни тата парĕ.

Тăшмат унăн хăйĕн шатăкĕнчех çапса аркатма хĕçпăшал çеç мар, тыпул та кирлĕ. Тыпул ресурсĕсем çителĕклĕ пулеç, хамăран Таван çĕршыв тăшмана сĕнтерме кирлĕ таранах хăватлă та вăйлă пулма пултарать. Ахальтен мар ĕнтĕ пирĕн колхозникемпе колхозницăсем кăçал тата тах та вăйлăрах тырпул туса илме ĕмĕтленеççĕ. Çак ĕмĕт пурнăçа кĕтĕр тесен, республика уявĕ тĕлне пысăк парне хатĕрлес тесен, пирĕн колхозсемпе МТС-сем тата совхозсен, çуракине большевикла хатĕрленнĕ кĕтсе илмелле, ăна хăвăрт та организованнăн туса ирттермелле, вăйлă тырпул никĕсне хывса хăвармалла.

Партин Шупашкар хула комитечĕн пленумĕ республика столицине юсаса, илемлетсе хатĕрлес ыйтăва çĕклерĕ. Хула совет исполкомне обществаллă çуртсене юсама хатĕрлеме, парксемпе садсене йĕркене кĕртсе çитерме, урамсене, стадионсене, çулсемпе кĕперсене юсама хушса хăварчĕ. Предприятисемпе артельсен тата учрежденисен администрацийĕсене тата çулăмлăш парторганизацисене хăйсен çурт-йĕрĕсене, картишĕсене юсаса илемлетсе телĕппине тивĕçлĕ мерăсем йышăнма хушрĕ. Çак ĕçсене пĕтĕм хула халăхне явăçтарсан кăна пĕтĕмпех тата кирлĕ пек пурнăçа кĕртме май пуррине асăрхаттарса хăварчĕ. Калас пулать, ку ыйту республика столицинчен кăна мар, ытти хуласемпе ялсемшĕн те пысăк ыйту пулса тăрать. Республика юбилейне кĕтсе илме хатĕрленсе, кашни хуларах тата кашни ялтах благоустройство ĕçне вăйлатса ямалла. Вырăнти майсемпе тата ресурссемпе усă курса, театрсемпе клубсене, мунчасемпе гостиницăсене, социализмлă культура çурчĕсемпе булăк çурчĕсене, шкулсемпе больницăсене тата ытти обществаллă çуртсене юсаса, вĕсенче культурăллă йĕркене туса хумалла, май пур çĕрте сĕнĕрен те туса лартмалла; трамсене, сулийĕрсемпе кĕперсене, садсемпе парксене йĕркене кĕртмелле. Паллах, выраçенчи Советсем хăйсем кăна çак ĕçе вăхăтра туса ирттерме вăй çитереймеçĕ, вĕсене партипе комсомол тата профсоюз организацийĕсем, предприятисемпе учрежденисен, артельсен коллективĕсем мĕнпур ĕçсыннисем пулăшса пыма тивĕçлĕ. Çак енĕпе вара массăллă воскресниксем организацилесе ирттерни выраннă та усăллă пулмалла.

Чăваш АССР 25 çул тултарнине кĕтсе илме хатĕрленес тĕлĕппе республикăн культурăллă учрежденисем, искусствăна литература работникĕсем умĕнче те пысăк задача тăрать. Вĕсен юбилей тĕлне халăха паха произведенисем çырса памалла, лайăх постановкăсемпе кинокартинăсем кăртма хатĕрленмелле, тĕрлĕ выставкăсем организацилемелле. Çав произведенисемпе постановкăсенче тата выставкăсенче чăваш халăхĕн 25 çул хушшинчи çитĕнĕвĕсемпе çĕнтерĕвĕссене кăтартса памалла. Ик кустьăпа литература работникĕсен тăван халăх умĕнчи хисеплĕ тивĕçĕ—республика юбилейĕ тĕлне пирĕн наципаллĕ культурăпа искусствăна çĕнĕ пусăма çĕклекен произведенисем хатĕрлесе параçи пулса тăрать.

Чăваш халăхĕн историйĕнчи чи паллă кулленчен пĕри—республика 25 çул тултарнă кун — çитиччен пилĕк уйăхран та кăмăлах вăхăт юлчĕ. Çак кĕске вăхăтрах пирĕн чылай пысăк ĕçсем пурнăçа кĕртмелле. Çавăнпа та хатĕрленӳ ĕçĕ халĕ ĕнтĕ хĕрӳллĕн пуçланса каймалла. Паллах, вăл ĕç хăй тĕллĕпех пулса пырасси шанăн йăнăш пулмĕ пулĕччĕ. Кашни предприятипе артель коллективĕн, кашни учрежденин, кашни колхоз правленин умне тĕлĕн-тĕплĕн шухăшласа пăхмалла та, ĕç планĕ туса, вăл плана пурнăçа кĕртесси-кĕрешмелле. Партипе совет организацисен юбилей кунне кĕтсе илме хатĕрлес ĕçе организацилесе ертсе пымалла.

ТУРКМЕНИРИ ИРХИ ÇУРАКИ

Январĕн 1-мĕшĕнче йăш çанталăкра Ашхабад облаçĕнчи Теджен районĕнчи колхозниксем çурхи тулă акма тытăннă. Малалла-хи икĕ кун хушшинче 400 гектар акнă. Марый районĕнче илхăçалăх артельсем чылайăшĕ çуракине тухнă. (TACC).

Ленин кунĕсем умĕн

В. И. Ленин пурăнкă ялта

Куйбышев облаçĕнчи Алакаевка ялĕ сыпăкисем Ленин кунĕсене хатĕрленеççĕ. 1889—1891 çулсенче çулла В. И. Ленин çак ялта пыра-пыра пурăннă.

Кинель ятлă район центрĕнчен 30 километрта ларакан çак илемлĕ ялта Ленин çинчен аса илтерекен япаласене пуçне те—Ленин пурăннă çурта, çурт ăшĕнчи япаласене, çав вăхăтри аллейăна тата ытти çуртĕрсене те лайăх упраса хăварнă.

Владимир Ильич пурăннă çурта музей тунă. 1942 çулта ку ялта Ленин шăллĕ Дмитрий Ильич Ульянов пырса кайнă. Музей работникĕсене вăл 55 çул каярах Ильич пурăннă чухнехи обстановкăна туса хума пулăшнă. Ленин кунĕсем тĕлĕнче уçăлнă çурт-музее юсаса ситереççĕ.

Музейре библиотека тата «Ленин Атăл çинче» ятлă выставка уçăлмалла. (TACC).

Ӳкерчĕк çинче: В. И. Ленин красногвардеецсемпе калаçать.
П. ВАСИЛЬЕВ ӳкерчĕкĕ.

Владимир Ильич пурăннă тата ĕçленĕ çĕрте

Ленинградра нумай паллă вырăнсем Ленин ячĕпе сыхăнса тăраççĕ. Петрограда пырсан, Владимир Ильич час-часах уйрăм сыпăсем хваттерĕсенче, вăрттăн ĕçлекен революционерсем патĕнче пурăнса ĕçленĕ. Ленинград çыннисем Ленин пурăннă çав хваттерсене, музейсем туса хунăскерсене, тĕплĕн пăхса усраççĕ. Вăл хваттерсем ĕнтĕ революциллĕ кĕрешĕвĕн тата большевиксен партийĕн памятникĕсем пулса тăнă.

Блокада вăхăтĕнче Ленин пурăннă хваттерсенчи хаклă япаласене—сĕтел-пуканесене, Ленин усă курнă япаласене, картинăсене, фотографине тĕрлĕ документсене пурне те тенĕ пекех упраса хăварнă. Анчах çав хваттерсен çурчĕсене бомбăсем парахса тата тупăсемпе персе сиенленĕ.

Ильич ячĕпе тăракан переулокри 7/4 номерлĕ çурта, 1894 çулта Ленин пурăннăскере, снаряд лекнĕ те Ленин пурăннă хваттере иртнĕ. Халĕ ăна юсаса ситереççĕ. Вăл çуртри япаласене упраса хăварнă, мĕншĕн тесен вĕсене малтанах урăх çĕре куçарнă пулнă.

Владимир Ильичăн ытти хваттерĕсене те юсаса ситереççĕ. Херсон урамĕнчи 5-мĕш номерлĕ çуртра кантăксем партаççĕ тата стенасене шуратаççĕ. Кунта Ленин совет власĕн мир çинчен тата çĕр çинчен калакан пĕрвăйăн декречĕсене çырнă.

Январĕн 9-мĕшĕнче Советăн 10-мĕш урамĕнчи 17-мĕш номерлĕ çуртри Аллилуев хваттерне тĕпренех юсанă. 1917 çулта, контрреволюциллĕ вăхăтлăх правительство хĕсĕрленинчен пытанса, Ленин çаканта пурăннă. Çавăн пекех Сердоболь урамĕнчи Фованова хваттерне те юсаççĕ. Ленин унта 1917 çулта пурăннă. Хĕçпăшаллă восстани тăвасси çинчен большевиксен Центральный Комитечĕ решени йышăннă хваттере те юсаççĕ.

Юсаса çитернĕ хыççăн çак вырăнсенче пурнине те музейсем уçăлмалла. Кирлĕ материалсемпе документсене тата япаласене пухса çитернĕ ĕнтĕ. Хăшпĕр музейсене çĕнĕ экспонатсем параççĕ. (TACC).

В. И. ЛЕНИН МУЗЕЙĔН КИЕВРИ ФИЛИАЛНЕ ЮСАÇÇЕ

Киевра В. И. Ленинăн тĕп музейĕн филиалне юсаса ситереççĕ. Унăн çуртне тĕпренех юсанă. Музейри япаласене 15 залра вырнаçтарса тухаççĕ.

Уйрăм щитсем çине марксизм — ленинизм классикĕсен произведенийĕсене вырнаçтараç хунă. Кунта Ленинăн «Что делать», «Шаг вперед, два шага назад», «Две тактики социал-демократии в демократической революции» ятлă кĕнекисем тата ытти çĕр, пулмалла. Украина халăхĕ ирĕке тухасшăн кĕрешнине Ленинпа Сталин ертсе пыни çинчен калакан документсем нумай. Щитсем урлă ытлăн саспаллисемпе Ленинăн çак сăмахĕсене çырса хунă: «Вырăссемпе украинецсен пролетарийĕсем пĕрлешсен çеç Ирĕклĕ Украина пулма пултарать, çавăн пек пĕрлешӳ пулмасан—ун çинчен шутламалли те çук».

Музейре В. И. Ленинăн çĕнĕ скульптурипе, çавăн пекех «Сталин, Ворошилов, Буденный граждан вăрçи вăхăтĕнче Хĕвеланăç фронтĕнче» ятлă скульптура туяннă. Киевăр пуçне, Мускаври, Киеври тата Тбилисири чи лайăх художниксен картинисене туяннă.

Икĕ залра «Украина халăхĕ Отечественнăй вăрçăра» текен ыйтупа пысăк выставка уçнă. Çавăнтах Украина ССР-ĕнчи 9,316 733 çын ала пуснă кĕнекене—«Украина халăхĕ аслă Сталин патне» ятлăскерне кăларса хунă.

Киев филиалне юсас ĕçре музейĕн Тбилиси хулинчи филиалĕ пысăк пулăшу панă. Тбилисирен Сталин юлташ Кавказ леш енче пурăннине тата унăн революциллĕ ĕçне кăтартса паракан документсен фотокопийĕсене янă. Çавăн пекех Горире Сталин юлташ пурăннă çуртăн тата Авлабарти типографин макечĕсене, Украинăпа Грузи халăхĕсем хушшинчи сталинла туслăха кăтартса паракан нумай материалсем илсе килнĕ. (TACC).

СССР Совнаркомĕнче

А. С. Грибоедов çуралнăранпа 150 çул тултагнă май унăн ятне ĕмĕрлĕхе паллă туса хăварасси çинчен

1945 çулхи январĕн 15-мĕшĕнче вырăсен аслă писателĕ Александр Сергеевич Грибоедов çуралнăранпа 150 çул тултарнă ятпа ССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çапла йышăннă:

1. Мускавра, Ленинградра тата Тбилисире А. С. Грибоедов памятникĕсене лартас.

2. Çаксене А. С. Грибоедов ятне парас:

а) Мускаври 29-мĕш номерлĕ шкула;

б) Ленинградри 203-мĕш номерлĕ шкула;

в) Ленинградри Октябрьски районри библиотекăна.

3. А. С. Грибоедовăн мĕнпур сочинийĕсене пухса пичетлесе каларас.

4. Мускаври Ломоносов ячĕпе тăракан Ленин орденлĕ Государство университетĕнче филологи факультетĕнчи студентсене уйăхне 400-шер тенкĕ тӳлемелли 4 стипенди тата вырăс литературин кафедрин аспирантĕсене уйăхне 800-шер тенкĕ тӳлемелли пĕр стипенди;

б) Ленинградри Ленин орденлĕ Государство университетĕнче—филологи факультетĕнчи студентсене уйăхне 400-шер тенкĕ тӳлемелли 2 стипенди;

в) Тбилисири Государство университетĕнче—филологи факультетĕнчи студентсене уйăхне 400-шер тенкĕ тӳлемелли 2 стипенди;

г) Совет писателĕсен Союзĕн Литература институтĕнче—студентсене уйăхне 400-шер тенкĕ тӳлемелли пĕр стипенди;

д) Театр искусствин государство институтĕнче—студентсене уйăхне 400-шер тенкĕ тӳлемелли 2 стипенди.

УКРАИНАН ХĔВЕЛАНАÇ ОБЛАÇĔСЕНЧИ УЧИТЕЛЬСЕН КАНАШЛАВĔ

Львовра Украинăн хĕвеланăç облаçĕнчи учительсен 5 кун хушши пынă пĕрремĕш канашлăвĕ хупăннă. Канашлу ĕçĕсенче М. С. Хрущев, Л. Р. Корниец, Д. З. Мануильский тата ытти юлташсем те хутшăннă.

Украина Советлă Социализмлă Республикинче халăха вĕрентес ĕç менле пынине çинчен наукăн тава тивĕçлĕ деятелĕ, Х. Чавдаров профессор доклад туса панă.

Немĕçсен фашистла захватчикĕсем,—тенĕ докладчик. — Украинăри халăха вĕрентес ĕçе питĕ пысăк сиен кӳнĕ. Темиçе пин шкула çунтарса янă е аркатса тăкнă, оборудованне тата вĕренӳ пособийĕсене пĕтерсе тăкнă. Темиçе пин учителе персе пăрахнă, асаплантарса вĕлернĕ е немĕç каторгине хăваласа кайнă.

Ирĕке тухнă республикăра культура пысăк хăвăртлăхсемпе ӳсет. Учительсем, хăлăх пулăшнипе, шкулсене хăвăрт юсаççĕ. Темиçе миллион ача татах парта хушшине ларса вĕренме пуçланă. Украинăн хĕвеланăç облаçĕсенчи шкулсене ура çине тăратас тĕлĕшпе тата çулăа каларас ĕçе организацилес тĕлĕшпе нумай ĕç тунă ĕнтĕ.

УССР Совнаркомĕн председательĕ заместителĕ Д. З. Мануильский «Украинăсен немĕçле нацонализмĕçем фашистла захватчиксене пулăшас ĕçре» ятлă доклад туса пакă.

Фашистла захватчикемпе вĕсен тарçисем—Украинăсен немĕçле националисчĕсем тискер ĕçсем тунă çинчен учительсем нумай каласа панă. Украинăри хĕвеланăç облаçĕсенче пурнăçне те халĕ халăха вĕрентес ĕçе ура çине тăратас тĕлĕшпе нумай ĕç тунă.

Канашлура пулăнăсем Верховный Главнокомандующи Совет Союзĕн Маршалне Сталин юлташ патне пысăк хавалăхпа салам яма йышăннă. (TACC).

Вырăнти удобренисем хатĕрлемелли уйăхлăх

РЕСПУБЛИКАРИ КОЛХОЗСЕНЧЕ 1945 ÇУЛХИ ЯНВАРĔН 10-МĔШĔ ТĔЛНЕ ÇУРАКИНЕ ХАТĔРЛЕНЕС ЕÇ МĔНЛЕ ПЫНИНЕ КАТАРТАКАН СВОДКА

Районсем	Пĕрчĕллĕ тырă вăрлăхĕсене сортланă	Хĕлле тислĕк кăларманлăк плана тултарнă
Улатăр	70,0	19,2
Элĕк	77,6	12,0
Вăркар	100,0	50,0
Йĕпреç	74,3	28,0
Ишлей	60,1	34,2
Калинино	41,0	31,3
Канаш	76,6	44,9
Куславкка	74,5	32,7
Комсомольски	75,1	32,5
Хĕрлĕ Чутай	37,6	11,1
Красноармейски	84,1	41,4
Кувакино	97,7	17,8
Сĕнтĕрвăрри	66,2	23,6
Муркаш	34,3	9,1
Октябрьски	30,6	23,3
Первомайски	63,3	23,3
Пăрачкав	69,8	7,8
Советски	41,3	28,8
Сĕнтĕр	65,1	27,2
Вăрмар	63,8	41,5
Çĕрпÿ	87,6	14,9
Шупашкар	47,7	8,6
Чкаловски	78,7	1,0
Чурачăк	63,2	42,6
Шăмăршă	63,1	28,2
Шăхасан	82,6	34,0
Сĕмĕрле	59,9	18,8
Етĕрне	30,5	20,3
Тăвай	27,0	28,5
Елчĕк	72,6	36,3

Вырăнти удобренисем хатĕрлессине вăйлатмалла

Вырăнти удобренисем хатĕрлемелли уйăхлăхăн çурри иртрĕ. Чылай районсем çак вăхăтра тислĕк пухса хире кăларас тата ытти удобренисем пухас хире тĕлĕпше палăрмаллах ÿсĕм турĕç. Вăрнар, Красноармейски, Канаш, Вăрмар, Чурачăк, Елчĕк районĕсенчи колхозсем январĕн 10-мĕшĕ тĕлнех уйăхлăх планне 30—40 процент тултарчĕç. Вăрнар районĕ уйăхлăхăн вунă кунĕнче уя 90.553 лав, Канаш районĕ 53.977 лав тислĕк кăларнă. Çак районсенчи нумай колхозсем уйăхлăхăн кашни кунĕнчех хăйсен графикне ытлашшипех пурнăçласа пыраççĕ. Уя тислĕк кăларнине пĕрлех нумай колхозсем ытти удобренисене пухас тĕлĕпше те лайăх ĕçлеççĕ. Вăрнар, Елчĕк районĕсенчи колхозсем кĕл, кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухмалли вунăкунлăх планне ытлашшипех тултарнă.

Анчах вырăнти удобренисем пухса уя тислĕк турттарас тĕлĕпше ытла та начар ĕçлекен районсем те пур-ха. Сăмахран, Чкаловски район вунăкунлăх планне пурĕ те 0,8 процент. Шупашкар район 6,1 процент, Хĕрлĕ Чутай районĕ 8,7 процент, Элĕк районĕ 8 процент, Муркаш районĕ 6,3 процент, Октябрьски район 5,5 процент кăна тултарнă. Çавăн пекех Кувакино, Сĕмĕрле, Шăмăршă районĕсенче те вырăнти удобренисем хатĕрлес ĕç калама çук начар пырать. Çак районсенче вырăнти удобренисем хатĕрлемелли уйăхлăх тавра колхозниксемпе колхозницăсене кирлĕ лек мобилизацилемен, уйăхлăх задачисем çинчен тивĕçлĕ ăнлантарса пăман.

Республикăра уйрăмăнах торф кăларас ĕç çителĕксĕр пырать. Сĕнтĕр, Шупашкар, Октябрьски, Первомайски, Шăмăршă, Чкаловски районсенче торф хатĕрлеме пачах тытăнман.

Уйăхлăхăн çурри иртрĕ. Юлашки якĕ эрне хушшинче кашни районăн, кашни колхозăн уйăхлăх планне пур тĕрлĕ удобренисем тĕлĕпше те тултармалла.

УЙĂХЛĂХА АКТИВЛĂН ХУТШĂНСА

МУРКАШ. Вырăнти удобренисем хатĕрлемелли уйăхлăха «Свобода» колхозăнче ĕçлекен активлăн хутшăнчĕç. Çуртсыррисем акмалли çĕр лаптăкĕ çине пурĕ 3.179 лав тислĕк тăкнă, 49 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ, 30 центнер кĕл хатĕрленĕ.

1-мĕш бригада аван ĕçлет. Ку бригада уйăхре 600 лав ытла тислĕк кăларчĕ. Бригадăри колхозницăсем кашни кунах нормăран иртнĕ тислĕк кăлараççĕ.

Т. МАРКОВА.

Торф хатĕрлеме тытăнман

КУКЕÇ (Телефонпа). Хире тислĕк кăларас тĕлĕшпе нумай колхозсем кашни кунхи графика ытлашшипех пурнăçласа пыраççĕ. Ун тислĕк кăларнине пĕрлех нумай колхозсем ытти удобренисене пухас тĕлĕпше те лайăх ĕçлеççĕ. Вăрнар, Елчĕк районĕсенчи колхозсем кĕл, кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухмалли вунăкунлăх планне ытлашшипех тултарнă.

Анчах вырăнти удобренисем пухса уя тислĕк турттарас тĕлĕшпе ытла та начар ĕçлекен районсем те пур-ха. Сăмахран, Чкаловски район вунăкунлăх планне пурĕ те 0,8 процент. Шупашкар район 6,1 процент, Хĕрлĕ Чутай районĕ 8,7 процент, Элĕк районĕ 8 процент, Муркаш районĕ 6,3 процент, Октябрьски район 5,5 процент кăна тултарнă. Çавăн пекех Кувакино, Сĕмĕрле, Шăмăршă районĕсенче те вырăнти удобренисем хатĕрлес ĕç калама çук начар пырать. Çак районсенче вырăнти удобренисем хатĕрлемелли уйăхлăх тавра колхозниксемпе колхозницăсене кирлĕ лек мобилизацилемен, уйăхлăх задачисем çинчен тивĕçлĕ ăнлантарса пăман.

Республикăра уйрăмăнах торф кăларас ĕç çителĕксĕр пырать. Сĕнтĕр, Шупашкар, Октябрьски, Первомайски, Шăмăршă, Чкаловски районсенче торф хатĕрлеме пачах тытăнман.

Уйăхлăхăн çурри иртрĕ. Юлашки якĕ эрне хушшинче кашни районăн, кашни колхозăн уйăхлăх планне пур тĕрлĕ удобренисем тĕлĕпше те тултармалла.

Районра торф кăларассипе нимĕн те тумаççĕ. Çак вăхăта çитсе те пĕр колхоз та торф хатĕрлеме тытăнман.

Г. ПЕТРОВ.

* * *

ЭЛЕК. (Телефонпа). Уйăхлăхăн вунă кунĕнче районри колхозсем 30226 лав тислĕк хире кăларнă. 774 центнер кĕл. 285 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ, 107 лав фекали хатĕрленĕ. «Первое мая», «Родина» колхозсенче уйăхлăх пысăк ăнăçлăхпа иртет. «Родина» колхоз 325 лав тислĕк кăларнă. 19 центнер кĕл. 20 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ. 8 лав фекали пухнă.

«Шуçăм», «Маяк», «Октябрь» тата Буденный ячĕпе тăракан колхозсем çак вăхăта çитсе те уйăхлăха хутшăнман.

Уйăхлăх çинчен пĕлмеççĕ

ИЕПРЕÇ, январĕн 15-мĕшĕ. (Телефонпа). Вырăнти удобренисем хатĕрлемелли уйăхлăх пуçланнăранпа чылай колхозсем хире тислĕк кăларас тĕлĕшпе лайăх ĕçлеççĕ.

Димитров ячĕпе тăракан колхозра вăрăç пачах урăхла тăрать. Кунта уйăхлăх пуçланнăранпа 520 лав тислĕк кăларассипе пуллă пулсан, пурĕ те 278 лав кăна кăларнă. План тăрăх 8 центнер кĕл. 10 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухмалли, паянхи кун тĕлне 5 центнер кĕл, 2 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ кăна хатĕрленĕ.

Районра уйрăмăнах торф хатĕрлесси ĕлсе пырать. Çак вăхăта çитсе пĕр «Искра» колхоз кăна çак ĕçе пуçăннă. Уйăхлăх пуçланнăранпа «Искра» колхоз членĕсем 135 лав торф хатĕрленĕ.

Вырăнти удобренисем хатĕрлемелли уйăхлăх иртсе пырать, анчах «Красный водник» колхозра çак уйăхлăх çинчен пĕлмеççĕ те.

П. КУРАКОВ.

ЛАТВИ ÇЫННИСЕНЕ СОВЕТ ПАСПОРЧĔСЕМ ПАРАÇÇЕ

Латви хулисенчи тата ялĕсенчи çынсене — рабочисене, служащисене, хресченсене пĕтĕм Совет Союзĕпе пĕр пек йышăнни совет паспорчĕсене параççĕ. Совет гражданствине тăни çинчен калакан паспортсене парас ĕç савăнăçлăн пуласа иртет.

Рига хулинчи çынсем нумайĕшĕ хăйсем 1941 çулта илнĕ совет паспорчĕсене ку тапранчченех упраса усранă. (ТАСС).

Чугун çул валли—вутă

Йĕпреç вăрманпромхозĕн иртнĕ кварталти ĕçĕсем

Йĕпреç вăрманпромхоз коллективĕ. Вăрнар вăрманпромхозĕнче ĕçлекенсемпе социализмла ăмăртăва тухса чугун çул транспорчĕ валли вутă хатĕрлемелли планне ытлашшипех тултарма пулнăччĕ. Халĕ йĕпреçсем хăйсен сăмахне тивĕçлипе пурнăçа кĕртрĕç: сезокри плана хатĕрлес енĕпе—107 процент, турттарас енĕпе—100 процент тултарчĕç. Пирĕн коллектив спецзаказсене пурнăçлас тĕлĕшпе те начар мар ĕçлет. 4-мĕш кварталта авнаци промышленноçĕ валли хурăнпа хыр, кăмрăк промышленноçĕ валли шпальниксем планĕ пăхиннчен иртнĕрсе хатĕрлесе панă.

Пирĕн вăрманпромхозра 4 вăрман пункчĕ. Вĕсем пурте пĕр-пĕринпе ăмăртăва тухнă. Ăмăртура халĕ Кăшмас вăрман пункчĕ (начальникĕ Сергеев юлташ) малта пырать. Ку пункт 4-мĕш кварталти вăрман çĕçен планне пур енĕпе те иртнĕрсе тултарнă. Çăваншăн пункт коллективĕ вăрманпромхоз директорĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ Ялавне илме тивăçлĕ пулчĕ. Пункти мастер участокĕсенчен П. Чипков мастерăн участокĕ лайăх ĕçлет. Унăн участокĕ 4-мĕш квартал планне хатĕрлес енĕпе 170 процент, турттарас енĕпе 165 процент тултарчĕ. Пирĕн коллектив палăлă стахановецпа Люциан Барилло юлташпа мухтанма пултарать. Вăл икĕ сезонра чугун çул транспорчĕ валли 2574 кубометр вутă хатĕрленĕ. пĕр иртнĕ кварталта кăна 425 кубометр хатĕрленĕ. Барилло юлташ сезон ĕçлениччен 1.100 кубометр вутă хатĕрлеме обязательство илчĕ. А. Ильинпа Каляканов шоферсем вутă турттарнă çĕрте тухăçлăн ĕçлеççĕ, вĕсем пирĕн чи лайăх шоферсем шутланаççĕ. Çавăн пек тухăçлă ĕçлекенсене стахановецсен билĕчĕсене паратлăр тата Хисеп хăмăсем çине кĕртетпĕр.

Пирĕн задача—стахановецсен йышне пĕрмаях ÿстерсе пырасси. Çавна май эпир стахановецсемшĕн куллен тăрăшатпăр, вĕсене премилетпĕр. Çак иртнĕ кварталта Чăваш АССР Вăрман промышленноçĕ Халăх Комиссарĕ Зверев юлташ пирĕн вăрманпромхозри 14 стахановеца мануфактура парса премилерĕ. 15-шер метр мануфактура тата преми илнисен шутĕнче Л. Барилло, А. Ильина, П. Попова, С. Парамоноз юлташсем пур.

Вăрманпромхозра 4 хĕрлĕ кĕтес ĕçлет, вĕсенче хаçат-журнал çителеклĕ. Унсăр пуçне Сталин юлташăн докладĕпе приказне вĕренмелли 4 кружок организацилĕнĕ, вăл кружоксенче 350 çын вĕренет.

Пирĕн вăрманпромхозра чугун çул транспорчĕ валли Йепреç, Çĕрпÿ тата Шупашкар районĕсем вутă хатĕрлеççĕ. Вĕсенчен Шупашкар районĕ лайăхрах ĕçлет. Çак район вăрманта ĕçлеме кирлĕ. лашасемпе çынсене вăхăтра тата çителеклĕ таран парса тăрать. Райсовет исполкомĕн председателĕ Миронов юлташ чугун çул транспорчĕ валли вутă хатĕрлес ĕçпе пĕрмаях интересленет, пирĕн вăрманпромхозпа тăтăшах çыхĕну тытать.

Çак кунсенче пирĕн вăрманпромхоз коллективĕ иртнĕ кварталти ĕçсен итогĕсене пăхса тухрĕ тата малашне тумалли ĕçсене палăртрĕ. Эпир çак çулхи 1-мĕш квартал планне хатĕрлес тата турттарас енĕпе мартăн 15-мĕшĕ тĕлне тултарма пуллăмăр.

Г. ФЕДОРОВ.
Йĕпреç вăрманпромхозĕн директорĕ.

Хĕвеланăç Европăри вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, январĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин Ардении акăлчансен çаресем çуменчи специальнăй корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: Ларош хулинчен кантăртарахри липирен хĕвеланăç-нерехре пыртакан аслă района нимĕçсенчен пĕтĕмлешпех тасатнă. Нимĕçсенчен тасатнă çав района Ардени вăрманĕн çурри ытла кĕрет. Çапла вара нимĕçсем декабрĕн 16-мĕшĕнче пуçласа янă наступлени вăхăтĕнче йышăнă салăт çурринче сиен пĕчĕкленнĕ. Çурçĕр енне наступлени туса пыракан американецсен пехоти кăнтăралла наступлени туса пыракан акăлчансен çаресемпе пĕрлешесси халĕ мĕн пурĕ те 2 миля çурă кăна тăрса юлнă. Бастонь хулинчен хĕвеланăç-нерехре наступлени туса пыракан американецсен çаресем икĕ миля çурă малаллă кайнă.

ЛОНДОН, январĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС) Союзниксен экспедицилле вăйăсен верховнăй командованийĕн штабĕ паян пичетлесе кăларнă пĕлтерĕве çапла каланă: Голландире союзниксен Ситтардран çурçĕр енелле наступлени туса пыракан çаресем Гебрук ялне йышăннă. Ардени савăлĕ районĕнче Сальм шывĕнчен хĕвелтухăçнерехре союзниксен çаресем Ставлота—Мальмеди хулисенчен кăнтăр еннелле чылай кайнă. Лангдир хулинчи кăнтăртарахри хаяр çапăçусем пыраççĕ, унта союзниксен çаресем, тăшман вăйлă хирĕç тăнине çĕнтерсе, Мон-ле-Бан енелле куçса пынă. Ларош хулинчен хĕвелтухăçнерехре союзниксем, тăшман хирĕç тăнине çĕнтерсе, кăшт малалла кайнă. Ларош хулинчен кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре тăшманăн йышлă мар гарнизонĕ вунă контратакăна сирсе янă, çав вăхăтрах союзниксен танксене тăшман пехоти пулăшса пынă. Ларошран кăнтăртарахра союзниксен çаресем каялла чакакан тăшмана хăваласа пынă. Орто хулине йышăннă. Союзниксен çурçĕр еннелле наступлени туса пыракан çаресем Витан хĕвелтухăçнерехре союзниксен çаресем Живэ патне çитнĕ. Союзниксен çаресем Бастонь хулинчен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре малаллă кайнă. Уффализ хулинчен 3—5 мильăра лараканскер чугун çул станцине çитнĕ.

Союзниксен çаресем тăшман çаресен Вогез районĕнчи савăлĕн хĕвелтухăç тăлкăнтар флангĕсене хирĕç наступлени туса пынă. Тăшман вăйлă хирĕç тăнă. Вăйлă япăнă хыççăн Мажино линийĕнче, Хагенау вăрманĕнчен çурçĕртерехре, союзниксен çаресем Гаттен таврашĕнче малаллă кайнă. Тăшман Риттерсгофенри хăйăн юлашки çирĕплетнĕ пункчĕне вăйлăн хÿтĕленĕ унта союзниксем халь наступлени туса пыраççĕ.

Союзниксен авиацийĕ тăшманăн вăрçă объекчĕсемпе çулйĕрĕсене тапăнă.

ЛОНДОН, январĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи хĕвелтухăçнерехре союзниксен çаресем Живэ патне çитнĕ. Союзниксен çаресем Бастонь хулинчен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре малаллă кайнă. Уффализ хулинчен 3—5 мильăра лараканскер чугун çул станцине çитнĕ.

Союзниксен çаресем тăшман çаресен Вогез районĕнчи савăлĕн хĕвелтухăç тăлкăнтар флангĕсене хирĕç наступлени туса пынă. Тăшман вăйлă хирĕç тăнă. Вăйлă япăнă хыççăн Мажино линийĕнче, Хагенау вăрманĕнчен çурçĕртерехре, союзниксен çаресем Гаттен таврашĕнче малаллă кайнă. Тăшман Риттерсгофенри хăйăн юлашки çирĕплетнĕ пункчĕне вăйлăн хÿтĕленĕ унта союзниксем халь наступлени туса пыраççĕ.

Союзниксен авиацийĕ тăшманăн вăрçă объекчĕсемпе çулйĕрĕсене тапăнă.

ЛОНДОН, январĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи хĕвелтухăçнерехре вĕрешекен çаресем, хĕçпăшалла боецприпассем тупас тесе, çаплах ухтараççĕ. Англи çаресем хальхи вăхăтра Аркасос аэродромне йышăнса тăраççĕ. Патрасран 20 миля кăнтăр-хĕвеланăçнерехре ЭЛАС ушăсем кăшт хирĕç тăраççĕ Грецин ытти районĕсенче лару-тăру лăпкă.

ЛОНДОН, январĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС) Рейтер агентстви Афинăран çакăн пек пĕлтернине парать: Греци правительстви Афинăри çыпăçусем вăхăтĕнче правительство çаресен хирĕç алла хĕçпăшал тытса çапăçă служащисене (государство учрежденийĕсемпе обществаллă учрежденисене ĕçлекенсене) пурне те вырăнтан кăларма çушакан закон хатĕрлет.

ЛОНДОН, январĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС) Лондонри радио паян кăнтăрла çапла пĕлтернĕ: перемири условийĕсем тăрăх Греци вăрçă ĕçĕсем паян çурçĕр тĕлĕнче пĕтмелле пулнă, анчах та вĕсем халь юлашки кунхисенчен те хаяртарах пыраççĕ.

МИЛАНРА ОСАДНАЙ ПОЛОЖЕНИ ТУСА ХУНА

ЛОНДОН, январĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонри радио пĕлтернĕ тăрăх, оккупацилăçсем Çурçĕр Италири Милан хулинче осаднăй положени туса хунă, мĕншĕн тесен хулара массăллă забастовкăсем пуçланса кайнă, хулари халăх хумханма пуçланă. Швейцаririn ситнĕ хыпарсем тăрăх, Милан хулинчи промышленноçть пĕтĕмлешпех ĕçлеме пăрахнă. Хула урамĕсенче фашистсемпе вĕсене хирĕç тăракаç организацин членĕсем хушшинче тытăçусем пула-пула иртеççĕ. Немĕç çарĕсем хула варрине хупăрласа илнĕ. Гестапо отрячĕсем килтен киле кĕрсе çÿреççĕ, ухтараççĕ, забастовкăна хутшăннă рабочисене шыраççĕ. Милан хулинче унă пин çынна ытла тытса хупнă.

ИТАЛИРЕ ÇЫНСЕНЕ ÇАРА ИЛЛИ

РИМ, январĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Çарĕç министрĕ 1915 çултан пуçласа 1923 çула çитиччен çуралнă унтер-офицерсемпе салтаксене çара илесси çинчен приказ кăларнă.

АМЕРИКĂРИ ХАÇАТСЕМ ШВЕЙЦАРИ ГИТЛЕРЛА ГЕРМАНИПЕ КИЛЕШТЕРСЕ ĔÇЛЕНИНЕ СИВЛЕÇÇЕ

НЬЮ-ЙОРК, январĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Швейцарин хальхи вăхăтри позицийĕ çинчен «Пост Диспетч» хаçат çапла çырать: Швейцари, тĕрĕссипе илсен, Пĕрлешÿллĕ Нацисене хирĕç вăрçать. Вăл чăн-чăн нейтралитет тытса тăнă пулсан, Италин фронтĕнче Германи хирĕç тăпассине çĕмĕрсе тăкнă пулĕччĕç, Хĕвеланăç фронтĕнче те нимĕçсем хирĕç тăни вăйсăрланнă пулăччĕ. Çапла ĕнтĕ, Пĕрлешÿллĕ Нацисен Швейцари тĕлĕшпе çакăн пек политикăна çеç тытса пымалла: вĕсен Швейцарире нимĕçсем, вăрçă хатĕрсене Швейцари урлă каçарса тăма чарма ыйтас пулать.

«Крисчен Сайенс Монитор» хаçат та Швейцари Германипе сыхăнса килештерсе ĕçленине сивлет.

ЛАВАЛЬ БАНДИЧĔСЕН ГЕРМАНИРИ ИЛАВИ

ПАРИЖ, январĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). «Либерасьон суар» хаçат Германирен çак кунсенче тарнă пĕр француз каласа кăтартнине пичетлесе кăларнă. Çав француз Германире пурăннă чухне Сигмаринген хулине пыра-пыра кайнă. Çак хулара Виши «правительствин» членĕсем пулнă сынсем хÿтлĕх тупнă. Унта çав сынсен пĕтĕм ирсĕр банди пĕрлешÿне пухăннă. Унта ак камсем пулнă: де Бринон, Дорио, Деа, Дарнан тата ыттисем те. Çумай, пĕтĕмне 1.200 сынна яхăн пухăннă. Çав Сигмаринген хулинче вичĕ министерство тунă. Çак «министерстсем» Сигмаринг хулинче пытанса пурăнакан сутăнчăксене Франципе турттарса тухнă. Государство укçи-тенкине ÿçĕмах салатма пуçланă. Вĕсем Франципе 38 миллиард франк ытла турттарса тухăç.

Дарнан, Дорио тата ытти сутăнчăксем ăкăмăн ĕçлеççĕ: вĕсем унта организаци туса ярсешăн, çав организацин ĕçĕ Франципе пăлхавсем тăвасси пулса тăмалла. Вĕсем çав тĕлĕшпе ĕçлеме вĕрентмешкăн ятарласа вăрттăн шкулсем ÿстнă. Çав шкулсенчен вĕренсе тухнă агентсене вĕсем Франципе ярса тăма шутлаççĕ. Вара çав агентсем Франципе Лавальпе Петэн майăл ĕçлекен çынсене Германирен хушса янă приказсене памалла. Çак пирĕн ĕçе хăйăнсене Иленмэ килĕшекенсене пурне те нумай укçа тÿлеме тата лайăх условисем туса памалла. Çав шкулсенченех тата шпионсемпе диверсантсене вĕрентсе кăларма шутлаççĕ. Вара вĕсене, Франципе аэроплансемпе имсе кайса, парашютсемпе пăрахма шутлаççĕ. Çав агентсем хăшпĕрисем Франципе Швейцари чикки урлă каçса кайнă та ĕнтĕ, вĕсем Франципе хăйсене хăйсем Германирен тарса килнĕ сынсем пек кăтартаççĕ. Анчах та çав сынсен аллинче сăтăрла ĕçсем тумалли хатĕрсем пур.

БОЛГАРИРЕ ВАРÇА ПРЕСТУПНИКĔСЕНЕ СУД ТУНИ

СОФИЯ, январĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС) Софи радио пĕлтернĕ тăрăх, январĕн 12-мĕшĕнче ĕлĕк регентсем, министрсем тата патша советникĕсем пулса ĕçленĕ сынсен судĕнче премьер-министр пулнă Муравиева тата регентсем пулнă Кирилл князьпе Миховран ытлă тытăннă.

Айăпланакан Муравиев хăйĕн айăпне мĕнле те пулин тунма тăрăшнă. Анчах та тĕпченĕ май премьер-министр пулнă Муравиев Багрянов политикинех тытса пынăскăн палăрса пынă. Çав политика немĕçсене Болгарирен лайăх тухса тарма май панă. Айăпланакан Кирилл князь та хăйне хăй нимĕн пĕлмен сын пек, политикăран ăскăр тăнă сын пек кăтартма тăрăшнă. Вăл Болгари правительстви тĕнĕ держависен пактне хăсан хутшăнса кайнине те «астумасть» иккен. Вăл Болгари патриотчĕсене йышлăн вĕлерни çинчен те «пĕлмен» иккен. Анчах та судра халăх сынчен айăплакансем ăна тăрă шыв çине кăларакан документсене вуласа кăтартнă. Вара çак Кирилл князьĕн ирĕксĕрех çакна йышăнмалăх тивнĕ: вăл регент пулса ĕçленĕ вăхăтра партизансене пĕтерсе тăкасси çинчен мини стрсен совечĕн ларăвĕсенче вунă хутчен сÿтсе-явнă.

Михов генерал та Кирилл князь пек хăйне хăй политика тĕлĕшĕнчен ним пĕлмен сын пек кăтартма хăтланнă, хăй çав вăхăтрах ним намăса пĕлмесĕр сапла каланă: эпĕ суд перçе пăрахма йышăннă приговорсене çирĕплетме чăранса тăман, тенĕ. 400 çынна перçе пăрахма йышăннă приговорсене çирĕплетсе панă, тесе айăпланине Михов генерал пĕтĕмĕшпех йышăннă.

ГРЕЦИРИ ЛАРУ-ТАРУ

ЛОНДОН, январĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи хĕçпăшалла вăйăсен штабĕ пичетлесе кăларнă пĕлтерĕве çапла каланă: Англи çаресемпе Греци правительстви Афины хулинчен çурçĕртерехре тата хĕвеланăçнерехре кĕрешекен çаресем, хĕçпăшалла боеприпассем тупас тесе, çаплах ухтараççĕ. Англи çаресем хальхи вăхăтра Аркасос аэродромне йышăнса тăраççĕ. Патрасран 20 миля кăнтăр-хĕвеланăçнерехре ЭЛАС ушăсем кăшт хирĕç тăраççĕ Грецин ытти районĕсенче лару-тăру лăпкă.

ЛОНДОН, январĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС) Рейтер агентстви Афинăран çакăн пек пĕлтернине парать: Греци правительстви Афинăри çыпăçусем вăхăтĕнче правительство çаресен хирĕç алла хĕçпăшал тытса çапăçă служащисене (государство учрежденийĕсемпе обществаллă учрежденисене ĕçлекенсене) пурне те вырăнтан кăларма çушакан закон хатĕрлет.

ЛОНДОН, январĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС) Лондонри радио паян кăнтăрла çапла пĕлтернĕ: перемири условийĕсем тăрăх Греци вăрçă ĕçĕсем паян çурçĕр тĕлĕнче пĕтмелле пулнă, анчах та вĕсем халь юлашки кунхисенчен те хаяртарах пыраççĕ.

АМЕРИКА АВИАЦИЙĔ ЯПОНИЕ ТАПАННИ

НЬЮ-ЙОРК, январĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Пĕрлешÿллĕ Штатсен çар министерстви çапла пĕлтернĕ: январĕн 14-мĕшĕнче кăнтăрла Америкăн «Вă екен крепость» йышши хăваттăран хăватлă бомбардировщиксем, Мариан утравĕсем хушшинчи Сайпан утравĕ çинчен вĕçсе тухса, Японин тĕп утравĕ пулса тăракан Хонсю утравĕ çинчи вĕрт объекчĕсене тапăннă.

Чăваш халăх поэтне Н. И. Шелепие лытарни

Январĕн 14-мĕшĕнче 11 сехетрен пуçласа виççĕ çурра çитиччен хула çынниссем Пичет çуртне тăтăшах пырса тăчĕç. Вĕсем Чăваш Совет Писателĕсен Правленийĕпе кĕрсе, халăх поэчĕпе юлашки хут сывпуллашаççĕ. Тăватă сехет çурă хушши Н. И. Шелепи тупăкĕ умĕнчен халăх тăлăмасть, шкул ачисем, педагогсем, рабочисемпе работницăсем, инженерсемпе врачсем, колхозчи арăмсем, сывăх колхозсенчен килнĕ колхозниксемпе колхозницăсем, писательсемпе журналистсем пĕр вĕремсĕр иртсе тăраççĕ.

Хăмачăпа витнĕ тупăкра халăх поэчĕн ÿчĕ выртать, какăре çинче «Знак почета» орденĕ çутăлать, хĕреслетсе хунă аллисем айĕнчен поэтăн «Çĕнтерÿ юррисем» ятлă кĕнеки курăнать. Йĕри-тавра чĕре чечекем, симĕс чăраш турачĕсем хурса тухнă, веноксем лартнă, вĕсем: ЧАССР Верховный Совет Президиумĕпе ЧАССР Совнаркомĕнчен, ВКП(б) хула комитечĕпе хула Совет исполкомĕнчен, Чăваш Совет Писателĕсен Правленийĕпе Чăваш Патшалăхăн Кашни çур сехетрен хисеплĕ хурал улшăнса тăрать, хуралта хула интеллигенцин представителĕсем, парти работникĕсем, писательсем, артистсем, художниксем тата ытти çынсем те тăраççĕ.

Виçĕ сехет çурăра Пичет çуртĕнчен Н. И. Шелепи тупăкне йăтса тухаççĕ. Ĕçхĕлпе Агаков писательсем сăмах калаçаççĕ. Вĕсем Шелепин пысăк таланчĕ çинчен, ăна пĕтĕм чăваш халăхĕ юратни çинчен, вăл пархатарлă ĕç туса хăварни çинчен каласа параççĕ. «Канлĕн те лăпкăн сывăр, Николай Иванович,—тет Ĕçхĕл юлташ,—санăн хаклă ĕçна санăн юлташусемпе литературăна çĕнĕрен килекен чăваш ачисем малаллă туса пырĕç, вĕсем санăн хисеплĕ ятна ĕмĕрех çÿлте тытăç».

Кун хыççăн траурлă процесси масар çинелле утать.

Масар çинче кĕске митинг пулса иртет. Ана Çутăç Халăх Комиссарĕ Макаров юлташ уçать, ВКП(б) хула комитечĕн секретарĕ Ислюков юлташ, Эльгерпе Шавлы писателсем сăмах калаççĕ.

Пытарма пынă йыштă халăх ĕмĕрлĕхех Шелепи ÿчĕпе сывпуллашать, кашнийĕ, тăпру çăмăл пултăр тесе, пĕрер ывăç тăпра пăрахать.

Шăпланчĕ юрăçă сасси... анчах та Шелепи хăварнă наследство чăваш халăхĕн илемлĕ çырулăхĕнче ытларăн фонд пулса юлĕ. Шелепи юрри-сăвăсемпе çамрăк ăрăпа воспитани пана çĕрте пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ, вĕсене пирĕн халăх яланах юратса вулĕ, мухтавлă поэтăн ятне яланах ăшшăн аса илĕ.

Колхоз çамрăкĕсен йĕлтĕрлĕ ăмăртăвĕ

СĔНТĔРВĂРРИ. Паянхи куна 724 колхозник колхоз çамрăкĕсен йĕлтĕрлĕ ăмăртăвне хутшăннă.

Колхозсем хушшинче мала тухас тĕлĕшпе пыракан ăмăрту уйрăмăнах «Октябрь» колхозра лайăх иртнĕ. Ку колхозра ăмăртăва пурĕ 74 çын хутшăннă. «Верный путь» колхозра—45 çын, «Наркомюст» колхозра 29 çын хутшăннă. «Наркомюст» колхозри Н. Григорьев 10 километра 50 минутра чупса тухнă.

* * *

ЕЛЧĔК. Колхоз çамрăкĕсен йĕлтĕрлĕ ăмăртăвĕнче пурĕ 54 колхозра пулса иртнĕ. Унта 1.890 çын хутшăннă. Вĕсенчен 1.420-шĕ ГТО нормисене панă. Ăмăртура лайăх йĕлтĕрĕсем палăрнă: Н. Ефимова 3 километра 15 минутра, В. Портнов 10 километра 55 минутра, Н. Кудрявцев çак дистанцинех 54 минутра чупса тухнă. Колхозсенчи лайăх йĕлтĕрĕсем районри ăмăртава хутшăнаççĕ.

Колхозсенче çулталăкри отчетсене тума хатĕрленеççĕ

ШАХАСАН. Районри колхозсем правленисем 1944 çулхи ялхуçалăх çулĕнчи ĕçсем çинчен колхозниксем пухăнсенче отчет туса пама хатĕрленеççĕ. Декабрĕн юлашки кунĕсенче тата январĕн пуçламăшĕнче колхозсен пĕтĕм пурлăхĕсене инвентаризацилесе тухнă. Обязательнăй перекепе государствăна тырă, выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем, техникăллă культурăсем, пахча-çимĕçсем памалли плансене мĕнле тултарнине уполнаркомзага тĕрĕслеççĕ. Районом колхозсем выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли планна майракаллă шултăра выльăхсем, сыснасем, сурăхсем енепе пĕтĕмпех тултарнă. Çак кунсенче колхозсен çулталăкри отчетне туса ирттерес ыйтупа районри çĕрĕç пайĕнче колхоз счетоводчĕсен семинарĕ пулса иртрĕ. Сахал опытлă счетоводсене отчет тăвас ĕçре пулăшма опытлă счетоводсене çирĕплетнĕ. Опытлă счетоводсем П. Николаев, К. Андреев, Облинов юлташсем кÿршĕри колхозсен счетоводчĕсене çулталăк отчетне тума пулăшса пыраççĕ.

А. АНТОНОВ.

ФЕОДОСИ ПОРТĔНЧЕ СУДНАСЕНЕ ШЫВ АЙĔНЧЕН КАЛАРНИ

Хĕллехи тăвăлсене пăхмасăрах, Феодоси портĕнче хăлă шыва путнă суднасене çиеле кăларас тĕлĕшпе пысăк ĕçсем туса ирттереççĕ. Шыв тĕпĕнче выртакан суднăсен корпусĕ вăйне металлран тунă листсем хывăççĕ, понтонсем çирĕплетсе çĕ. Ывăр условисене пăхмасăрах, водолазсем хăйсен ĕçĕсене чăрăх туса пĕтерме тăрăшаççĕ.

Хулана ирĕке кăларнă хыççăн Феодоси портĕнче «Зырянин», «Норчи» тата ытти суднасене те кăларнă. (ТАСС).

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСЫ: Г. Чăваш[illegible] промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство контори — 0—23.

НТ 00508

Вăрнар районĕнчи колхозниксен çĕнтерĕвĕсем

Вăрнар районĕнчи колхозниксемпе колхозницăсен вĕрçă вăхăтĕнчи пархатарлă ĕçне правительство 1944 çулта иккĕмĕш хут пысăка хурса хакларĕ.

Совет Союзĕн Совнаркомĕ, районсем хушшинче пыракан Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвăн пĕрремĕш тăпхăрти итогĕсене пăхса тухса, çуркуннехи ялхуçалăх ĕçĕсене кăтартуллă ирттернĕш